1941
МАРТ
9
ВЫРСАРНИКУН
57 (5772) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери Коммунистла кунĕ—мартăн 8-мĕш çинчен

ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ

Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери Коммунистла кунĕнче Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Совет Союзĕнчи работницăсене, колхозницăсене тата мĕнпур ĕççыннине хĕрарăмсене саламлать.

Мартăн 8-мĕш кунне капитализмлă çĕршывсенчи ĕççыннисем тĕнчери сарăлса пыракан империализмлă вăрçă—ĕççыннисене вĕçĕ-хĕррисĕр хĕн-хурпа асап кӳрекен вăрçă обстановкинче, капитализмлă эксплоатацин пусмăрĕ ӳссе пыракан обстановкăра кĕтсе илеççĕ.

Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери Коммунистла кунне ССР Союзĕнчи ĕççыннисем совет государствин тулашри тĕрĕс политики туса пынă мирлĕ ĕç условийĕсенче, халăх хуçалăхĕ пĕрмаях çĕкленсе пыракан, ĕççыннисен культури ӳссе пыракан тата вĕсен материальнăй пурнăçĕ лайăхланса пыракан обстановкăра кĕтсе илеççĕ.

Совет Союзĕнче промышленноçпа транспортра кăна 5 миллион ытла хĕрарăм ĕçлет. Социализм строительствин пур облаçĕсенче те — промышленноçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче, наукăра тата искусствăра вунпар та çĕршер пин совет хĕрарăмĕсем хăйсен ĕçĕнче социализмлă ĕçĕн чаплă образцĕсене кăтартаççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче хĕрарăма этемле мар хаярăн эксплоатацилесси тата хĕрарăмăн правасăрлăхĕ ытларах та ытларах ӳссе пынă вăхăтра, совет стройĕ обществăллă пурнăçăн пур облаçĕсенче те активлă, творчествăллă ĕç туса пыма хĕрарăма вĕçĕ хĕррисĕр пысăк майсем парать. Совет хĕрарăмĕсем сложнăй профессисене ăнăçлăн вĕренсе алла илсе пыраççĕ. Чугунçул транспортĕнче машинистсем, металлургире сталеварсем, çĕркăмăк промышленноçĕнче врубовăй машинăсен машинистчĕсем пулса ĕçлекен хĕрарăмсен хисепĕ ӳссе пырать. Çĕр пин ытла хĕрарăм тракторсемпе, комбайнсемпе тата ялхуçалăхĕнчи ытти сложнăй машинăсемпе ĕçлеççĕ. Совет хĕрарăм интеллигенцийĕн пысăк йышлă кадрĕсем хăвăрт ӳссе пыраççĕ. Социализмлă промышленноçра хĕрарăм инженерсемпе техниксем 170 пин çын ытла, шкулсенче 650 пин ытла учительница, амбулаторисенче, больницăсенче тата клиникăсенче хĕрарăм-врачсем 73 пин çын ытла, научно-исследовательски учрежденисемпе аслă шкулсенче 33 пин хĕрарăм научнăй работниксем пулса ĕçлеççĕ, ялхуçалăхĕнче аслă шкултан вĕренсе тухнă хĕрарăм-агрономсем 9 пин çын ытла ĕçлеççĕ.

Совет çĕршывĕнчи промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, транспортра, научнăй учрежденисемпе культурăллă учрежденисенче вунпар пин хĕрарăмсем ертсе пыракан ĕçре ĕçлеççĕ.

500 пине яхăн хĕрарăмсем — Советсен депутачĕсем, 1700 ытла хĕрарăм ССР Союзĕн, союзлă тата автономлă республикăсен Верховный Советĕсен депутачĕсен — совет халăхĕ суйланă тулли правăллă çынсем — çĕршыва ертсе пырас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Хĕвеланăç Украинăри, Хĕвеланăç Белоруссири, Бессарабири, Çурçĕр Буковинăри, Литвари, Латвири, Эстонири хавхаланса çĕкленнĕ миллионшар çынни хĕрарăмсем, государствăллă, производствăллă тата культурăллă ĕçе пирвайхи хут явăçнă хĕрарăмсем социализмлă пурнăçăн активлă строителĕсен речĕсене кĕчĕç.

Совет власĕ аслă шкулсенче вĕренме, кучухнехи наукăпа культурăн мĕнпур çитĕнĕвĕсене вĕренсе алла илме хĕрарăмсене анлă майсем туса пачĕ. ССР Союзĕнчи аслă шкулсемпе техникумсенче çĕршер пин хĕрачасем вĕренеççĕ.

Совет власĕ телейлĕ амăшĕ пулма лайăх условисем туса пачĕ. Ача-пăча учрежденийĕсен строительстви валли тата нумай ачаллă семьесем валли пособисем пама государство пысăк суммăсем парать. Пĕр 1940 çулта кăна нумай ачаллă амăшсене 1.225 миллион тенкĕ пособи панă.

Хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери Коммунистла кунне социализм строительствине хĕрарăмсене татах та ытларах явăçтарас лозунгпа, работницăсем, колхозницăсем тата мĕнпур ĕçхĕрарăмĕсем хушшинче социализмлă ăмăртупа стахановла движенине татах та анлăрах сарса ярас лозунгпа, совет хĕрарăмĕсем çĕршывăн хуçалăхпа оборона хăватне çирĕплетес тĕлĕшпе пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлес лозунгпа ирттермелле.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ мĕнпур парторганизацисене хĕрарăмсен Пĕтĕм тĕнчери Коммунистла кунне — мартăн 8-мĕшне массăллă-политикăллă кампани пек ирттерме, ССР Союзĕнчи ĕççыннисене капитализмлă пусмăртăн иреке кăларни пĕтĕм тĕнчинпех историллĕ вырăн йышăнса тăнине анлăн ăнлантарса пама, ирĕклĕ, тулли правăллă совет хĕрарăмĕн, социализмлă пурнăçăн активлă строительницин положенийĕпе капитализмлă çĕршывсенчи ĕçхĕрарăмĕн пусмăрлă положенийĕ хушшинчи вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк уйрăмлăх çинчен анлăн ăнлантарса пама хушать.

Парти, профсоюз тата комсомол организацийĕсем промышленность валли, транспортпа ялхуçалăхĕ валли хĕрарăмсенчен пысăк квалификацияллĕ кадрсем хатĕрлес ĕçе татах та анлăнрах организацилеме, сложнăй профессисене вĕренсе алла илес ĕçре хĕрарăмсене пулăшу пама, вĕсен производствăри квалификацине пĕрмаях хăпартса пыма тивĕçлĕ. Малта пыракан хĕрарăмсемпе хĕрачасене советпа хуçалăх организацийĕсенчи тата общественăллă организацисенчи ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме хăюллăнрах уйăрса пымалла, беспартийнăй хĕрарăмсенчен чи лайăххисене большевикла парти речĕсене хутшăнтарса пымалла.

Парти организацийĕсем çакна ăланах асра тытма тивĕçлĕ: хĕрарăмсен чи пысăк та кирлĕ задачисенчен пĕри вăл — ачасене, пирĕн пулас ăрува воспитани парса ӳстересси пулса тăрать. Амăш-хĕрарăмăн тăрăшассине вăйлатмалла, хĕрарăмсен пурнăçпа йăлари условийĕсене пур майсемпе те лайăхлатса пымалла, ача-пăча учрежденийĕсен, ача çуратмалли çуртсен хисепне анлăн ӳстерсе пымалла, шкулпа тата комсомолпа пĕрле амăшхĕрарăмсем ачасене — коммунизмăн пулас строителĕсене воспитани парса ӳстерес ĕçе татах та активлăрах хутшăнса ĕçлемелле пултăр тесе, пур условисене те туса памалла.

Парти организацийĕсем хĕрарăм-общественницăсен движенине пур майсемпе те пулăшса пыма, производствăри, рабочисен общежитийĕсенчи, обществăллă питани предприятийĕсенчи, государство суту-илĕвĕнчи, кооперацири культурăмăн пыракан кĕрешӳре вĕсен пултарулăхĕпе пуçарулăхне пулăшса пыма тивĕçлĕ. Хĕрарăмсен санитарипе оборона ĕçне вĕренсе хатĕрленнессишĕн тата физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатассишĕн пыракан движенине пулăшса пыни кирлĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна çирĕппĕн шанса тăрать: Совет Союзĕнчи ĕçхĕрарăмĕсем хăйсен пĕтĕм творчествăллă вăйне, хăйсен пĕтĕм энергине 1941 çулти халăх хуçалăх планне пурнăçа кĕртес ĕçе, социализмлă тăван çĕршăн хăватне малалла çирĕплетсе пырас ĕçе, хăйсен идейăлл-политикăллă шайне хăпартас ĕçе, Совет Союзне малалла ӳстерсе чеченклентерессишĕн пыракан кĕрешĕве парĕç.

ЕКП (б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ВКП(б) Мускав организацийĕн партактив пухăвĕ

Мартăн 4—5-мĕшсенче Союзсен Çурчĕн Колоннăй залĕнче ВКП(б) Мускав организацийĕн актив пухăвĕ пулнă.

Пуху президиумĕнче—ВКП(б) Мускав Комитечĕн тата Мускав Хула Комитечĕн бюровĕ. Калама çук вăйлăн хавхаланса, хисеплĕ президиума Сталин юлташпа пĕрле ЦК ВКП(б) Политбюроне суйланă.

Пуху ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн итогĕсем çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе-явнă. МК тата МГК ВКП(б) секретарĕ А. С. Щербаков юлташ доклад тунă.

Щербаков юлташ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисем большевикла партипе совет халăхĕн коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине палăлла тунă. Конференци решенийĕсем партипе совет халăхне Сталин юлташ партин XVIII Съезденче лартнă историллĕ задачăна—ытларах аталаннă капитализмлă çĕршывсене экономика тĕлĕшĕнчен те хăваласа иртсе каяс задачăна хăвăртрах пурнăçа кĕртме хĕçпăшаллан тарасçĕ.

— Çак куксенче,—тет Щербаков юлташ,—партин Центральный Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Госплание СССР хуçалăхĕн 15 çуллăх генеральнăй планне—кашни çын пуçне чугун, хурçă, топливо, электроэнерги, машинăсем тата производствăн ытти средствисемпе потреблени ăпăлисем туса кăларас тĕлĕшпе ытларах аталаннă капитализмлă çĕршывсене хăваласа çитсе иртсе каяс задачăна татса пама шутласа хунă 15 çуллăх плана хатĕрлемешкĕн тытăнма хушрĕç. Çакă вăл коммунизм строительствин конкретлă экономикăллă планĕ пулать. Партин Центральный Комитечĕ йышăннă, Сталин юлташ алă пуснă план пурнăçа кĕретех!

Щербаков юлташ çапла кăтартса парать: партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ парторганизацисен тимлĕхне татăклăнах промышленноçпа транспорт еннелле çавăрма хушрĕ. Малалла вăл çак требовани мĕнрен тухса тăнине тĕплĕн ăнлантарса парать. Пирĕн промышленность ӳссе аталанса пыракан хăвăртлăхсене тĕнчери пĕр çĕршыв та пĕлмен тата халĕ те пĕлмест. 1929 çулти производство шайне 100 вырăнне илес пулсан, 1940 çулта СССР Союзĕнче промышленность продукцийĕ тӳса кăларасси 534 процент ӳснĕ, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче вара—111 процент. Пĕр 1940 çулта кăна промышленность туса кăларнă пĕтĕм продукци хисепĕ 1939 çулти вăтăр 11 процент чухлĕ иртсе кайнă.

Социализмлă промышленность ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕсем çакнашкал ĕнтĕ. Çакăн пек ĕнтĕ хуçалăхăн социализмлă системин ыттисенчен пахарах енĕсем! Анчах та парти çакна ыйтать: пирĕн мăнкăмăллăнса лăпланса лармалла мар, промышленноçпа транспорт нушисемĕн, вĕсене малалла аталантарса пырассишĕн тăрăшасси кунран кунах ӳссе пымалла.

— Конференци,—тет малалла Щербаков юлташ,—наркоматсемпе парторганизацисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене çирĕппĕн критиклерĕ. Задача акă мĕнре: çав ситменлĕхсене мĕнле пулсан та чăсрах пĕтермелле, çакăнпа вара промышленноçпа транспорт татах та хăвăртрах ӳссе пырассине пурнăçа кĕртмелле.

Промышленноçăн хăшпĕр отраслисем кая юлса пыннине палăлла туса, Щербаков юлташ çапла кăтартса парать: пушай тĕлсенче плана тултарнă предприятисем ĕçне те çителĕклĕ тесе шутлама май çук, мĕншĕн тесен плана туса çăмăлрах, кивĕ образецсен шучĕпе тултарăççĕ, çакă вăл техникăна малалла илсе пырас, ăна пĕрмаях лайăхлатса пыраç ĕçрен çăмăлрах ямала. Çакăн пек положенин тĕп çăлтавне—наркоматсемпе парторганизацисен руководствинчи ситменлĕхсене—XVIII партконференци пĕтĕмĕшпех ӳсса пачĕ. Чылай тĕлсенче наркоматсем предприятисене чăннипе ертсе пымаççĕ, хуть-сем сырса кăна лараççĕ, парторганизацисем вара промышленноçпа транспорт ĕçĕшĕн хăйсем ответлă пулса тăни çинчен манаççĕ. Ĕçе сиелтен кăна тивекен пĕтĕмĕшле решенисем кăна йышăнса лармалла мар, промышленность енĕпе вăхăтран вăхăта кăна ĕçлемелле мар, ăна куллен кун вăхăтра пулăшса пымалла—акă мĕн тумалла ĕнтĕ халĕ парторганизацисен.

Малалла Щербаков юлташ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ 1941 çулти халăх хуçалăх планĕ çинчен йышăннă решенисем çине куçать.

— Çак планăн цифрисем,—тет вăл,—совет çыннисене ĕнтĕ тивĕçлипех савăнтараççĕ, социализмлă халăх хуçалăхĕ хăватлăн ӳссе пыни çинчен калаççĕ.

Халăх хуçалăхĕн тĕп вырăнта тăракан отраслисем тĕлĕшпе 1941 çул валли панă тĕп заданисем çинчен каласа, Щербаков юлташ çапла калать:

— XVIII конференци йышăннă решенисене пĕтĕм парти, пĕтĕм çĕршыв ĕçпе кĕрешӳн боевой программи вырăнне йышăнса кĕтсе илчĕç, çак решенисем çине производствăри хăватлă çĕнĕ çĕкленӳпе ответлерĕç.

Хăйĕн докладĕнче чылаях пысăк пайĕнче Щербаков юлташ Мускаври парторганизацин промышленноçпа транспорта ертсе пырас ĕçри задачисем çинчен калать.

— Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи промышленность туса кăларакан продукци,—тет вăл,—çĕршыври пĕтĕм промышленность туса кăларакан продукцире пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мускав большевикĕсен промышленноçа ертсе пырас ĕçри пысăк ответлăхĕ, партипе совет халăхĕн умĕнчи ответлăхĕ çавăнтан тухса тăрать ĕнтĕ.

Мускав промышленноçĕн 1940 çулти ĕçне анализ туса, Щербаков юлташ çапла кăтартса парать: промышленность пĕтĕмĕшпе илсен производство планне тултарни, ĕç тухăçлăхĕ чылаях çĕнĕ пире лăплантарса лартма пултаймаççĕ. Хальхи вăхăтра плана тулларасси çинчен кăна мар, плана кашни уйăхра, кашни вунă кунта, кашни кун тултарса пырасси çинчен, комплектлă тата пысăк пахалăхлă продукци туса кăларасси çинчен, продукцин хăйне тума ларакан хакне пĕрмаях чакарса пырасси çинчен сăмах пырать. Мускав промышленноçĕн ĕçне çак енчен илсе хаклас пулсан,—ăна урăх енчен илсе хаклама май та çук ĕнтĕ,—çакă ӳссĕнах курăнать: вăтам цифрăсем хыçенче нумай предприятисем тата промышленноçăн уйăрăмотраçлисем те çителĕксĕр ĕçлени пытанса тăрать.

Щербаков юлташ кая юлса пыракан предприятисемпе промышленность отраçлисен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн калать, плана номенклатура тăрăх тултарасси плана пĕтĕм продукци тăрăх тултарассинчен кая юлса пыни ниме юрăхсăр япала пулнине уйăрмах палăлла тăвать.

Мускав промышленноçĕн 1941 çулти январьпе февраль уйăхĕсенчи ĕçĕсем çине куçса, Щербаков юлташ çапла калать: план ытлашшипех тулса пырать пулсан та, вăл чылай предприятисемшĕн ĕçсем лайăх пынă пек курăнни çеç пулса тăрать. Ĕç акă мĕнре: ялан пекех январь итогĕсене иртнĕ çулти январь итогĕсемпе танлаштарса пăхаççĕ. Çапла вара ӳсĕм пулать. Анчах та, вĕсене иртнĕ çулти декабрьпе танлаштарса пăхсан, çакă курăнать: предприятисем продукци туса кăларассине ӳстермен кăна мар, йăлтах урăхла, ăна кăштах чакарнă та. Ку е тепĕр предприяти январьре мĕнле ĕçленине иртнĕ çулти январь уйăхĕнче мĕнле ĕçленине кăна танлаштарни тĕрĕс мар, çакă вăл ĕç çине экономика енĕпе мар, статистика енĕпе пăхни пулать! Çакăн пек планлани тата ĕç çине çапла пăхни работниксене пăсать, çулталăкăн пирвайхи уйăхĕсенче ĕç лайăх пынă пек курăнмалла тăвать, ун хыççăнхи уйăхсенче çĕнĕ йывăрлăхсем кăларса тăратать.

1941 çулти плана пур çĕрте те тата пĕр сăмахсăр тултарса пымалла. Ăна тултарма кирлĕ майсем кашни предприятирех пур, шалти резервсем питех те нумай. Анчах та çав резервсемпе, уйрăмăн илсен оборудовани мощноçĕн резервсемпе пур çĕрте те мар тĕрĕс усă кураççĕ. Щербаков юлташ техникăллă прогрессăн, çĕнĕ техникăна хăвăрт аталантарса тата унпа усă курма вĕренсе пырас ĕçшĕн пыракан кĕрешӳ пуçне тăрасси парторганизацисен тивĕçлĕхĕ пулнине палăлла тăвать. Анчах та хăшпĕр предприятисенче çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртсе пырассине пĕр вырăнта пăнтăхса тăракан, хăйсен канăçлăхне нименрен те сӳлерех хуракан тата çакна пула производство ноторĕсене, çĕнĕ техника творецĕсене кирлĕ пек пулăшу паман çынсем чăмантарса тăраççĕ. Производствăри тасамарлăха, культурсăрлăха тата йĕркесĕрлĕхе пур çĕрте те мар пĕтернĕха, производствăри чи кирлĕ культурăсăр промышленность ĕçне çĕклесе яма май çук.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ промышленность ĕçĕнчи штурмовщинăна пĕтерме, кулленхи çирĕп график çине куçма хушрĕ. Çакă вăл, тет Щербаков юлташ, технологиле, йывăрлăхсем умĕнче хăраса тăмалла мар, тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар, яланах çине тăрса вĕренмелле, татах та тепĕр хут вĕренмелле. Çапла тусан пирĕн умра тăракан пур задачăсене тĕ ăнăçлăнрах татса парăпăр!

Сывă пултăр Сталин юлташ!

Щербаков юлташăн юлашки сăмахĕсене саламласа, залра тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Активлă Сталин юлташа чысласа, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине тата Ленинла-Сталинла Центральный Комитета чысласа хăвăтлă оваци тăвать.

Щербаков юлташ доклачĕ тăрăх хĕрӳллĕ пренисем сарăлса кайнă. Тухса калана ораторсем—партипе хуçалăх работникĕсем—Пĕтĕм Союзри XVIII конференци йышăннă решенисене пĕр шухăшлă пулса ырлана, промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи тата вĕсене парторганизацисем енчен ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене уçса пана, конференци решенийĕсене хăвăртрах пурнăçа кĕртмелли конкретлă çулйĕрсене кăтартса панă.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн пропагандăна агитаци управленийĕн начальникĕ Александров юлташ тухса каланине пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Александров юлташ çапла кăтартса парать: Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцире сӳтсе-явнă ыйтусем халăх хуçалăхĕн малашнехи поступательнăй движенийĕшĕн кăна мар, тата парти кадрĕсене экономикăна вĕрентес тата идеологи тĕлĕшĕнчен малалла хатĕрлесе пырас ĕçшĕн те калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн кадрсен экономикăллă тата техникăллă пĕлӳлĕхĕ çинчен тăракан ыйту хальхи вăхăтра промышленноçпа транспорт аталанăвĕн хăвăртлăхĕсемпе техникăллă шайĕшĕн питех те кирлĕ вырăн йышăнса тăрать. Промышленноçа ертсе пыма коммунизм строительствин экономикăллă законĕсене пĕлни кирлĕ. Çакă вăл социализмлă экономика уйрăмлăхĕсенчен тухса тăрать тата пирĕн предприятисенче экономикăллă тата техникăллă большевикла йĕркелĕх туса хурас ĕçре татса паракан вырăн йышăнса тăрать.

Экономикăллă пĕлӳлĕхсене вĕренсе алла илмелли майсем калама çук пысăк. Çак майсемпе вара пачах çителĕксĕр усă кураççĕ. Пирĕн научнăй институтсемпе журналсем ку тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, парти работникĕсене экономика енĕпе вĕрентсе хатĕрлес ĕçре пропагандăн мĕнпур средстивсене ĕçе ямалла.

— Пирĕн партипе хуçалăх активĕн,—тет Александров юлташ,—сахалтан та çакă икĕ тĕп ыйтура ориентировка илме пĕлмелле: пĕрремĕшĕнчен, экономика тĕлĕшĕнчен пĕлсе шутлама тата, иккĕмĕшĕнчен, ĕçпе управленин научнăй организацийĕпе паллашмалла. Экономика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс шутлама вĕренес тени мĕне пĕлтерет-ха вăл? Çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: пуринчен малтан, пирĕн работниксене продукцин хăйне тума ларакан хакĕн ыйтăвĕсенче ирĕклĕнех ориентировка илме вĕрентмелле.

Хăйĕн сăмахне вĕçлесе, Александров юлташ çакна палăлла тăвать: ертсе пыракан кадрсене кăна мар, тата пĕтĕм рабочи класа промышленность экономикипе паллаштарасси çинчен Ленин панă кăтартăва пурнăçа кĕртме вăхăт çитрĕ. Экономикăллă пĕлӳлĕхе илес ĕç пирĕн культурăра, пирĕн идеологиллĕ хатĕрленӳре чи кая юлнă участок пулса тăрать. Совет çĕршывĕ майĕпен коммунизма куçас ĕçе пурнăçа кĕртсе пырать—коммунизма куçассин хăвăртлăхĕ хальхи вăхăтра пуринчен ытларах пирĕн культурлăхран, цивилизованноçран, хуçалăха тытса тăма тата ертсе пыма пĕлнинчен килет. Пирĕн задача—Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци йышăннă решенисене—совет çĕршывĕ валли малалла ataланса пыма питех те пысăк майсем уçса паракан, Сталин юлташăн идейисен асăпаран та аслă вăйне кăтартса паракан решенисене большевикла пурнăçа кĕртесси пулса тăрать!

Александров юлташăн юлашки сăмахĕсене саламласа, нумайччен алă çупаççĕ.

А. С. Щербаков юлташ юлашки сăмах тухса каланă хыççăн, актив пухăвĕ пĕр саслă пулса резолюци йышăнать, çак резолюцире пуху ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене пĕтĕмĕшпех ырлать тата çак решенисене хăвăртрах пурнăçа кĕртме практикăллă мероприятисем палăртать.

(ТАСС).

ССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Наукăпа техникăн тава тивĕçлĕ деятельне Б. Г. Галеркин академика Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Строительнăй механика тата упругость теорийĕ енĕпе калама çук чаплă научнăй ĕçсем туйăмăн наукăпа техникăн тава тивĕçлĕ деятельне Борис Григорьевич **Галеркин** академика, вăл çуралнă 70 çул тултарнă май, **Ленин орденĕпе** наградăлас.

ССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 7-мĕш.

„СССР Н-169" самолет Желания мысĕ çинче

И. И. Черевичный тытса пыракан «СССР Н-169» самолет, навигаци пуçланас умĕн пăрсене сăнас тĕлĕшпе Арктикăна вĕçсе кайнăскер, мартăн 7-мĕшĕнче 10 сехет те 40 минутăра Желания мысĕ çине анса ларнă. (Сĕнĕ Çĕрĕн çурçĕрти вĕçĕ).

Сывлăш карапĕ «СССР Н-169» самолет малалла Желания мысĕнчен Рудольф утравĕ çине вĕçсе каймалла.

Квартал планне 164 процент тултарнă

ÇЕРПУ, мартăн 7-мĕш. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Районри апат-çимĕç предприятийĕнчи работницăсем хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла кунне производство ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. Ольга Каштанова, Ядринцева тата Максимова юлташсем февраль уйăхĕнчи плана кашниех 144 процент тултарнă. Вĕсем март уйăхĕнче те плана кашни кунах тата ытлашшинех тултарса пыраççĕ.

Пр[illegible]култа вĕренекен тата унта ĕçлекен хĕрарăмсем уйрăмах пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Закройщица Рыжова юлташ ертсе пыракан бригадири хĕрарăмсен отделенийĕ квартали плана 164 процент тултарнă. Ку отделенинче ĕçлекен хĕрарăмсенчен 85 проценчĕ стахановла ĕçлеççĕ. Кулленхи ĕç нормине Рауткина 236 процент, Иванова — 152 процент, Полищук — 142 процент, Николаева 113 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Т. МАЙОРОВ.

Партконференци решенийĕсене ăнлантарса паратпăр

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ хупăниччен пуçламĕш парторганизаци сумĕнчи агитколлектив партконференцинче туса панă докладсене тата конференци йышăннă решенисене колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама тытăнчĕ.

Пирĕн агитаторсем малтанхи вăхăтра та начар мар ĕçленĕ. Çавна пула «Сталь» колхоз малта пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ĕç дисциплини çирĕпленет, вĕсем колхоз производствинче тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта колхоз пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те паха çитĕнӳсем тунă. Колхозăн тăватă ферма: сĕт-çу, сысна, сурăх тата чăх-чĕп фермисем пур. 1940 çулта сысна фермине кашни амаран 26 çăвăр илсе пăхса çитĕнтерĕ. 1939—1940 çулсенче колхоз Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă.

Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче предприятисенчи тасалăхпа йĕркелĕх çинчен тĕплĕн калана. Предприятисенче те, колхозсенчи фермăсенче те тасалăхпа йĕркелĕх пулмалла.

Колхоз çуракине хĕрсех хатĕрленет. Вăрлăхсене сортласа тасатнă, вĕсене акма юрăхлă кондицине лартнă. 32 плуг, 30 сӳре юсанă. Лаша кӳлмелли хатĕрсем сителĕклĕ. 44 центнер минерал удобрени кӳрсе килес вырăнне 52 центнер кӳрсе килнĕ.

П. ЖИДКОВ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Сталь» колхозри агитколлектив руководителĕ.

Республикăри партактивăн пухăвĕ

Мартăн 8-мĕшĕнче, Шупашкарти Советсен çурчĕн залĕнче, республикăри партактивăн пухăвĕ уçалчĕ. Пухăва ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ уçрĕ.

Пуху хăйĕн ĕçĕсене ертсе пыма президиума ВКП(б) Обкомĕн бюро членĕсене, çавăн пекех тата Серов юлташа (ЦК ВКП(б) çумĕнчи Партиллĕ Контроль Комиссин уполномоченнийĕ) тата Белолипецкий юлташа (Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ) суйларĕç.

Пухăва пынисем, пурте хĕрӳллĕн алă çупса, хисеплĕ президиума **Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Л. М. Каганович, Андреев, Жданов, Микоян, Хрущев, Берия, Шверник, Вознесенский, Щербаков, Маленков** тата **Димитров** юлташсене суйларĕç.

Пуху кун йĕркинче пĕр ыйту — ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин итогĕсем çинчен. Ку ыйту тăрăх ВКП(б) Обкомĕн тата Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ доклад турĕ.

Кун хыççăн Чарыков юлташ доклачĕ тăрăх пренисем пуçланчĕç.

Партактив пухăвĕ, тăвăллăн алă çупса, Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Республикăри партактивăн пухăвĕ икĕ кун хушши — мартăн 8-мĕшĕнче тата мартăн 9-мĕшĕнче — ĕçлет.

АКАДЕМИК ЕМ. ЯРОСЛАВСКИЙ

Партин вуннăмĕш с‘езчĕ 20 çул тултарнă тĕле*)

I

Большевиксен коммунистла партийĕ ертсе пыракан рабочисемпе хресченсем пит пысăк вăй хурса кĕрешнипе, 1920 çулăн вĕçĕ тĕлне шалти контрреволюцие хирĕç тата интервентсен вăйĕсене хирĕç граждăн вăрçине, тĕпрен илсен, вĕçлесе çитернĕ. Антанта социализмлă республикăна хирĕç тунă виçĕ похода сирсе пăрахнă, белогвардеецсен кĕтĕвĕсене тата вĕсене пулăшаканскене — интервентсене — совет çĕрĕнчен хăваласа кăларса янă.

Империализмлă вăрçă, унтан граждăн вăрçи йывăр наследство хăварчĕç, социализм çулĕпе малалла кайма çавна кирек мĕнле пулсан та пĕтермеллех пулнă.

Хĕрлĕ Çăран çĕнтерĕвĕ хĕçпăшал вăйĕпе большевиксене çĕнме çуккине империализмлă çăткăнсене лайăх кăтартса панă. Империализмлă правительствăсен совет республики пулса тăнă факта йышăнмалла килнĕ. Çапла капитализмлă государствăсен сăнчăрне татнă, вара вĕсемпе пирвайхи договорсене тунă.

Совет çĕршывĕ хăйĕн вăйĕсене мирлĕ строительствăна, юхăнса çитнĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратас ĕçе яма май илнĕ. Граждăн вăрçи тапхăрĕнче çĕршывăн пĕтĕм çар вăйне, экономикăллă вăйне пухса тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ çĕртен мирлĕ строительствăна, юхăннă хуçалăха ура çине тăратас ĕçе куçасси пит йывăр обстановкăра пулса пынă.

Партипе совет правительстви умĕнче çакăн пек задача тăнă—вăрçă суранĕсене тӳрлетмелле, юхăннă промышленноçа, транспорта тата ялхуçалăхне ура çине тăратмалла пулнă.

Вăрçă вăхăтĕнче шултра промышленность, уйрăмах металлурги пуринчен ытла юхăнса юлнă. Сăмахран, 1913 çулта Российăра 4,2 миллион тонна чугун шăратса кăларнă пулсан, 1920 çулта пурĕ те 115 пин тонна кăна чугун туса кăларнă. Шултра промышленноçăн пĕтĕм продукцийĕ вăрçăнченхи хисепĕн çиччĕмĕш пайĕ чухлĕ кăна пулнă. Транспорт çав тери юхăннă пирки, тавар турттарасси вăрçăнченхи хисепĕн пиллĕкмĕш пайĕ чухлĕ кăна пулнă. Паровозсем 57 процент ытла, вагонсем унтан та нумайрах стройран тухнă.

Фабрикăсемпе заводсенче чĕр-тавар çитмĕн пирки, нумай предприятисем хупăна-хупăна ларнă; ыттисене вăрçă вăхăтĕнче аркатса, çунтарса пĕтернĕ, вĕсем ишĕлчĕкпе юхăнчăкăн кичем картини пулса тăнă; виççĕмĕш пайĕ—чарăна-чарăна кăна ĕçленĕ. Пролетариатăн пĕр пайĕ пролетарисен хисепĕнчен тухса ӳкнĕ.

Ялхуçалăхĕн лару-тăрăвĕ те йывăрлăхра пулнă. Ялхуçалăхĕн паризм вăхăтĕнчи çав тери чухăн шайĕпе танлаштарсан та, ялхуçалăхĕн 1920 çулхи продукцийĕ вăрçăнченхи хисепĕн çурринне яхăн кăна пулнă. Тырă ăнса пулман тата юхăнса çитнĕ губернисем продовольстви разверстки планне тултарма пултарайман. Выльăх-чĕрлĕх хисепĕ хăрушла чакнă.

Тырпул нумайрах пухса кĕртесси ун чухне курăнман, мĕншĕн тесен акнă çĕр хисепĕ сахалланса, çĕре ĕçлесси начарланса пынă. Çакăн пек положенин тĕп сăлтавĕ çакăнта пулнă: продовольстви разверстки чухне хресчен ялхуçалăх продукцийĕн ытлашши пайне пĕтĕмпех государствăна парса пынă, хăйне валли кашни едок пуçне пĕчĕкçĕ норма кăна хăварнă. Хресченне хăйĕн хуçалăхне сарса, лайăхлатса пама хавхалантараканни нимĕн те пулман. Çавăнпа та хресченсен пысăкрах пайĕ акмалли çĕр лаптăкне ӳстерме, хуçалăха лайăхлатма тăрăшман кăна мар, пачах урăхла, çимелĕх кăна, «едок» нормине акма кăна тăрăшнă, натуральнăй хуçалăха куçса пынă.

Граждăн вăрçи тапхăрĕнче хресченĕн, йывăр пулнă пулсан та, продовольстви разверткипе килĕшмеллех пулнă. Граждăн вăрçи пынă вăхăтра, вăрçă мĕнле вĕçленесси палла пулман чухне, хресчен каллех помещик тавăрăнасран шиклеме пултарнă. Хресчен совет власăне хăйне помещикрен сыхланине курса, совет власне пулăшса пынă. Анчах граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн хресченсем вăрçă вăхăтĕнче тӳснĕ йывăрлăхсем вĕсемшĕн ӳкрăмах йывăр пек туйăна пуçланă. Хресчен ĕнтĕ вăрçăллă коммунизм тапхăрĕнче пулнă положенипе текех килĕшестĕн пулман.

Çавăнпа та граждăн вăрçи хыççăн хресченсем совет власăн мероприятийĕсене—продовольстви разверсткине—килĕштерменни çивĕччĕн палăрма пуçланă. Граждăн вăрçи цĕтнипе пĕрле вăрçăллă коммунизм политики хăй мĕн тума пултарнине туса çитернĕ.

Çапла вара, парти умне, совет власĕ умне пролетариатпа хресченсен союзне сыхласа хăварма экономикăллă çĕнĕ никĕс тупас ыйту çивĕччĕн тухса тăнă, мĕншĕн тесен çак çĕнĕ никĕсĕр союз тытăнса тăма пултарайман, рабочисемпе хресченсен союзĕсĕр совет власĕ те ун çине пролетариат диктатурине хирĕçле вăйсем хĕснине çĕнме пултарайман пулнă пулĕччĕ.

Совета хирĕçле партисем çав тапхăрта хăйсен ĕçне пурте вăтам хресченсене совет власне хирĕç тăратас тĕлĕшпе туса пынă. Вăтам хресченсем, вăрçăллă коммунизм политикипе килĕшменнипе, иккĕленсе тăнă, хăшпĕр çĕрте кулаксен, эсерсен, меньшевиксен контрреволюциллĕ агитацийĕ хыçăн кайнă, кусем вара час-часах колчаковецсен, деникинецсен, дутовецсен юлашкийĕсемпе тата белогвардеецсен ытти каяшĕсемпе пĕр пулса ĕçленĕ.

Граждăн вăрçи тапхăрĕнче, пролетариат диктатури пуринчен ытла ирĕксĕрлес методпа ӳсă курнă чухне пулса тăнă отношенисем ку тапхăрта ĕнтĕ çĕнĕ политикăпа, совет власăн мероприятийĕсене пурнăçа хĕртес ĕçри тĕп метод ăнлантарса ĕнентересси пулса тăракан политикăпа улшăнмалла пулнă. Çакнашкал улшăну кирлине ун чухне нумай работниксем çăмăллăн мар ăнланса пынă, çавăнпа та ĕçе тĕпренех çĕнетсе урăхлатни кирлĕ пулнă.

Советсен VIII съездĕнче ВЦИК 1920 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх тунă электрификаци тĕлĕшпе ĕçлекен государство комиссийĕн докладне итленĕ. Ленинăн электрификаци планĕ тăрăх çитес çывăх вунă çул хушшинче районсенче пысăк электростанцисем 30 станци туса лартмалла, вĕсен пĕтĕм мощноçĕ 1750 пин киловатт пулмалла пулнă.

Çĕршыва электрификацилессин планĕ çине, Советсен VIII съезчĕн делегачĕсем пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ çак план çине, Рыковпа Троцкий тăшманла пăхнă.

Ленинăн электрификаци планне Сталин юлташ хĕрӳллĕн хӳтленĕ. Вăл çак плана практикăра пурнăçа кӳртес ĕçе тытăнма сĕннĕ. Российйăна электрификацилессин планĕпе паллашнă хыççăн, Сталин юлташ Ленин патне çапла çырнă:

«Пит те паха, лайăх çырнă кĕнеке. Чăннипех пĕрлĕхлĕ тата чăннипех те **государствăллă** хуçалăх планĕн питĕ ăста тунă, нимĕнле **кавычкăсăр** ӳкерчĕк. Хуçалăх тĕлĕшпе кая юлнă Российăн советлă надстройки валли хальхи условисенче чăннипех те реальнăй, пĕртен-пĕр пулма пултаракан техникăллă-производствăллă никĕс туса хума эпир пурăнакан вăхăтра тытăнса пăхнă пĕртен-пĕр марксистла ĕç. Астăватăр-и Троцкийĕн квалификацисĕр **хресченсемпе**-рабочисен массисене (ĕç çарне) вăрçăчченхи промышленность ванчăкĕсенче массăллăн ĕçлеттернипе Российăна «хуçалăх тĕлĕшпе çĕнĕрен чĕртсе ямалли» пĕлтĕрхи «планне» (унăн тезисĕсене). Мĕнтери мĕскĕнлĕх, мĕнтери кая юлнăлăх—**Госплро** планĕпе танлаштарсан! Хăйне Российăна авалхи тумпа «çăлма» килнĕ Ибсен геройĕ тесе шутлакан вăтам ĕмĕрхи кустарь... Мĕне тăраççĕ пирĕн пичетре хамăра намăслантарма час-часах пичетленсе тухакан «пĕрлĕхлĕ плансем»,—приготовительнăй класрисем ачалла пакăлтатни... Е тата: халĕ те пулин **Гослрона** «критиклекен», хăлхи таранах кивви ăшне путса ларнă Рыковăн обывателле «реализмĕ» (чăннипе, маниловщина)...» (Ленин и Сталин, сборник посвященний к изучению истории ВКП(б), т II, 1937, стр. 365).

Съезд Российăна электрификацилемелли плана, «хуçалăхри аслă пуçарупи малтанхи утăмĕ» пулса тăнă плана, ырланă.

Ленин хăйĕн планĕнче, çĕршыв хуçалăхне çĕклентерессин планĕнче, концессисене чылай пысăк вырăна хунă. Ленин: концессисем промышленноçăн хăшпĕр пайĕсене вăйлатас ĕçе, пирĕн çĕр айĕнчи пуянлăхсене кăларса усă курас ĕçе ютçĕршыв капиталне, ютçĕршывсенчи малта тăракан техникăна хутшăнтармалли майçенчен пĕри, тесе шутланă. Ленин: концесси политики вăл—капитализмпа килĕшни мар, капитализма хирĕç малалла кĕрешни пулать, тесе ăнлантарса панă.

Концессисем нумай сарăлса кайман. Вĕсен экономикăллă результачĕсем пысăк пулман.

Эпир совет халăхĕн хăйĕн вăйĕпех промышленноçа ура çине тăратма, пĕтĕм халăх хуçалăхне реконструкцилеме пултартăмăр.

Çав тапхăрта, экономикăллă кризиса пула, политикăлла кризис та пулнă, вăл—парти ăшĕнче кĕрешӳ çивĕччленнине палăрнă. Ленинпа Сталин ертсе пынипе парти, хăватлăн кĕрешсе, меньшевиксемпе, эсерсемпе, анархистсемпе сыхăнса ĕçленĕ троцкистсене тата большевизмăн ытти тăшманĕсене çапса çĕмĕрчĕ. Ленина хирĕçле элементсем партие хирĕç кĕрешни пролетариат диктатурине вăйсăрлатас, хресченсен ӳсмĕрлĕ массисем ăна шанса тăрассине пĕтерес тĕллевпе пулса пынă.

1921 çулти февраль уйăхĕн вĕçĕнче Кронштадтра пăлхав пуçланнă, унăн пуçĕнче белогвардеецсем тăнă, вĕсем эсерсенчен, меньшевиксенчен тата вĕсемпе пĕр майлă çынсенчен тунă комитетсене мала кăларса тăратса, хăйсем хӳтте пытанма тăрăшнă.

Кронштадтри пăлхав пуçланнă тата ăна пусарнă вăхăтра чылай районсенче кулаксен восстанийĕсене пĕтерме ĕлкĕреймен пулнă (Çĕпĕрти Ишим восстанийĕ, Тамбов губернинчи антоновщина, Атăл тăрăхĕнчи кулаксен восстанийĕсем), çав вăхăтра промышленноçлă уйрăм предприятисенче те эсерсемпе меньшевиксем совета хирĕçле резолюцисем йышăнтарнисем пулнă. Парти кирлĕ мерăсене йышăннипе, пăлхава часах пĕтерсе хунă.

II.

Парти X съезда мĕнле йывăр обстановкăра хатĕрленсе пынине эпир куртăмăр ĕнтĕ. Съезд умĕн Ленинпа Сталин парти умне питех те палла задачăсем чылай кăларса тăратнă, вĕсене пурнăçа кĕртни çĕршывра юхăнчăклăха пĕтерме май ланă пулнă. Партин Центральный Комитетĕнче çĕршыври обмена, хулапа ял таварсем улăштарса тăрассине лайăхлатас тĕлĕшпе тĕрлĕрен проектсем сӳтсе-явнă, çавна лайăхлатмасан хуласене апатçимĕç тăратас ĕçе лайăхлатма, промышленноçа аталантарма, ялхуçалăхне ура çине тăратма май килмен. Хресченсен материаллă пурнăçне лайăхлатмасăр, вĕсен тавар илес пултарулăхне ӳстермесĕр хуласенче промышленноçа вăйлатса ярасси çинчен, рабочисен материаллă пурнăçне лайăхлатасси çинчен шухăшламалли те пулман.

Парти членĕсем пурте çĕршыв умĕнче тăракан çак гигантла задачăсене татса парассишĕн активлăн кĕрешни кирлĕ пулнă. Анчах, ун пек пулман; 1920 çул вĕçĕнчех, Ленинпа Сталин хирĕç калапине пăхмасăрах, профсоюзсем çинчен дискусси сарăлса кайнă, вăл нумай ыйтусене татса парас ĕçе чылаях чарса тăнă, мĕншĕн тесен, Ленин калани пек, çак 1920 çулăн вĕçĕпе 1921 çул пуçламĕшĕнчи чи йывăр вăхăтра пулнă дискусси партие тĕп задачăран—нумай тĕрлĕ экономикăллă тата политикăллă ыйтусене татса парассинчен пăрса янă.

Дискусси пĕлтерĕшне ăнланса илес тесен, парти профсоюзсем çине мĕнле пăхни çинчен каласа парас пулать. Граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн рабочи класăн массăллă организацийĕсен — профсоюзсен ролĕ çинчен тăракан ыйту калама çук пысăк вырăн йышăннă. Партин Центральный Комитечĕ çапла шутланă: «...промышленноçа чĕртес ĕçе унта рабочи класа тата унăн профсоюзĕсене хутшăнтармасăр тума çук, хуçалăх юхăнни вăл интервенципе блокада пекех халăхăн хăрушă тăшманĕ пулса тăнине рабочисене каласа ăнлантарсан, вĕсене çав ĕçе хутшăнтарма пулать, партипе профсоюзсем рабочи класс тĕлĕшпе фронтра пулнă пек çар приказĕсемпе мар,--фронтра чăнах та приказсем кирлĕ,—ăнлантарса ĕнентернипе, ăнлантарса ĕнентерес методпа ĕçлесен, вĕсем

Укерчĕк çинче: ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри наначлăвĕн участникĕсем. Лараççĕ (сулахайран сылтăмалла): Мордва АССР делегацийĕн руководителĕ **П. Г. Арбузов** юлташ, ăна Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Пысăк кĕмĕл медалĕпе наградăланă; Йĕпреçри сортоиспытательнăй участок заведующийĕ **М. М. Максимов** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк ылттăн медалĕпе наградăланă); Шупашкар районĕнчи сортоиспытательнăй участок заведующийĕ **С. Г. Григорьев** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă); Тăвай районĕнчи «1-ое Мая» колхоз фермин заведующийĕ **Н. К. Кошмачков** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă). Тăраççĕ: Калинински районри Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕ **Е. Г. Коротков** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă); Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз членĕ **М. Я. Додонова** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк ылттăн тата Пĕчĕк кĕмĕл медалĕсемпе наградăланă); Кувакино районĕнчи «Ударник» колхоз членĕ **А. К. Чурина** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе наградăланă); Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Красное Сормово» колхоз членĕ **В. П. Данилов** юлташ (ялхуçалăх выставкин Пĕчĕк чĕмĕл медалĕпе наградăланă).

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Предприятисен укçа-тенкĕ хуçалăхĕ çине ытларах çаврăнса пăхмалла

Государство банкĕнче 2-мĕш номерлĕ картотека пур. Çав картотека çине укçа-тенкĕ пулман пирки расчетнăй счетсене хупнă предприятисене тата суту-илу организацийĕсене кĕртеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех тата банкра 222-мĕш номерлĕ счет пур. Çак счет тăрăх хуçалăхлă организацисен банкран суту-илу е производство нушисем валли илнĕ ссудăсене срокра тӳлесе татман парăмсене шута илеççĕ. Çапла вара 2-мĕш номерлĕ картотека тата 222-мĕш номерлĕ счет çинчи показательсем, хăйпа майлă, термометр пек пулса, хуçалăхлă организацисен укçа-тенкĕ ĕçĕ мĕнле пулса пынине уççăн кăтартса параççĕ.

2-мĕш номерлĕ картотека тата 222-мĕш номерлĕ счет çинчи парăмсем ӳссе пыни производствăллă плана тултарса пырайман пирки е чĕртаварсен запасĕ нумайланса пынине е тата дебиторсен хисепĕ ӳссе пынине пула финанс хуçалăхĕ тӳсме çук япăхса кайнине кăтартса параççĕ. Кĕскен каласан, заводăн, артелĕн, суту-илу тата хуçалăхлă организацисен производствинче, çавнашкалах финанс хуçалăхĕнче кăшт кăна кăлтăк пулни, чи малтанах, 2-мĕш номерлĕ картотека çинче, банк панă ссудăпа усă курнă чухне 222-мĕш номерлĕ счет çинче палăк пулать.

Канашри вагонсем юсакан заводăн 1940 çулти октябрĕн 1-мĕш тĕлне 2-мĕш номерлă картотека пулнă, ун çинче 946 пин тенкĕ парăм шутланнă. Çакă вара рабочисене ĕçукçи тӳлес ĕçре пысăк чăрмав кӳнĕ, чĕртавар парса тăракансем завод адресĕпе чĕртавар куçарма чарăннă. Çакă вăл производствăллă плана тултарман тата накладной расходсене планпа пăхнинчен ирттерсе расходланă пирки пулнă.

Хальхи вăхăтра заводăн ĕçĕсем лайăхланчĕç, парăмсем çук, чĕртавар паракансемпне тата банкпа вăхăтра расчет тăвать. Анчах, апла пулсан та завод хăйĕн уйрăм участкĕсенчи прорывĕсене пĕтернĕ, теме çук-ха. Чăн та, вăл иртнĕ çула ăнăçлăн вĕçлерĕ, 1694 пин тенкĕ тупăш илнĕ. 1940 çулта завод парăмсене вăхăтра парса татман пирки 175 пин тенкĕ пенипе штраф, вагонсем простой тунине пула 250 пин тенкĕ штраф тӳленĕ.

«Майăн пĕрремĕшĕ» артелĕн ĕçĕсем те чаплах мар. Çак артель — Канаш хулинче пысăк производствăсенчен пĕри. Вăл иртнĕ çулта 1142 пин тенкĕлĕх сĕтел-пукансем, дивансем тата ытти япаласем туса кăларнă, çулталăк планне 90 процента яхăн тултарнă. 1941 çулти январь уйăхĕнчи плана 103 процент тултарнă. Артель производствине йăлтах механизациленĕ. Тăрăшса ĕçлесен татах та нумайрах продукци кăларма пултарать.

1940 çулти иккĕмĕш çурма çултан пуçласа çак артелĕн пĕрмаях 2-мĕш номерлĕ картотека пулнă. Хăшпĕр чухне артелĕн парăмĕ 190 пин тенке çитнĕ. Артель хаклă тăракан сĕтелсем, дивансем туса кăларнă. Фонд тытакансем, çавнашкалах снабсбыт çав таварсене илмесĕр тăнă. Çапла вара, артелĕн туса кăларнă продукцийĕ 1941 çулти январĕн 1-мĕшне 220 пин тенкĕлĕх пухăннă.

Тĕрĕссипе илсен, Чăвашдревпромсоюз артеле ертсе пыман, производствăллă плана ĕççыннисем мĕнле товар ыйтнине шута илмесĕр ярса панă, артелĕн продукцине вырнаçтармалли договорсем пулман. Çавăнпа унăн продукцине илекенсене пăхăнса тăмалла пулнă. Хальхи вăхăтра артель СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинчен йышăннă постановлени тăрăх хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетет. Артель халĕ хуçалăхра куллен кирлĕ япаласем, сăмахран, кухнясенчи сĕтелсем, табуреткăсем ытларах туса кăларма палăртнă.

Чăвашдревпромсоюз артеле оборот тума укçа-тенкĕ парсан, вăл хăйĕн финанс хуçалăхне йĕркеleме пултарать. Февраль уйăхĕн вĕçĕнче артелĕн ĕçукçи парăмĕ 20 пин тенкĕ шутланать.

Глававтотракторосбыт бази малтанхи вăхăтра укçа-тенкĕ енĕпе çирĕп организаци шутланнă, унăн 1940 çулти тăваттăмĕш кварталĕнче парăм пулман. Çулталăк вĕçĕнче вара унăн парăмсем ӳснĕ, банкпа срокчен расчет туман вăхăтсем пулнă. Февраль уйăхĕн вĕçĕнче базăн парăмĕ 325 пин тенкĕ, вăл шутран банка тӳлемелли парăм 43 пин тенкĕ, поставщиксене тӳлемелли парăм 282 пин тенкĕ таран ӳснĕ. Парăмсем ӳссе пыни базăра тракторсен запаслă пайĕсем ĕлкĕрнĕ тата ремонтăнă тракторсен запаслă пайĕсем ĕлкĕрсе çитнипе пулнă. Ремонтăнă тракторсен запаслă пайĕсем ĕлкĕрсе çитнипе, нумай вăхăт хушши вырăнсăр выртнипе, çавăнпа

Италире туса хатĕрлекен торпеда.

ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Грецири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, кисен малти подразделенийĕсем, тенĕ мартăн 6-мĕшĕнче Албанири фронтра Англин сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăйăпысăк мар çапăçусем пулнă. Фронтăн сен командованийĕ кăларнă коммюникере, Эль-Агеилран хĕвеланăç енчи районра противникăн бронетанковăй отрядне каялла хăваласа янă.

Хĕвелтухăç Африкăра пысăк çапăçусемех пулман. Итали командованийĕн сводкинче калана тăрăх, Хĕвелтухăç Африкăри Курмук таврашĕнчĕ (Англо-Египет Суданĕпе Абиссини хушшинчи чикĕре) Итали войскисем Англи чаçĕсен атакине сирсе янă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Абиссини партизанĕсем Дебра-Маркос патĕнчен хĕвелтухăç еннелле 13 километрта вырнаçса тăракан Манзука ялне туртса илнĕ (Дебра-Маркос — Годжам провинцийĕнчи тĕп хула).

Итали Сомалийĕнчи фронтра, тенĕ Англи сводкинче, Англи войскисем Феррфер пунктне туртса илнĕ (Булобурти патĕнчен çурçĕр-хĕвеланăç еннелле 160 километрта). Англичансем малаллах кайса пыраççĕ.

Англи фронтĕнче Германи авиацийĕн чылаях пысăк активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 8-мĕшĕнче Германи самолечĕсем Кăнтăр тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Англири нумай районсем сине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсене портсен сооруженийĕсем, аэродромсем тата промышленноçлă предприятисем сине пăрахнă. Англи самолечĕсем, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, мартăн 6-мĕшĕнче Ла-Манш проливĕ тĕлĕнче Германин пĕр бомбардировщикне персе антарнă.

Мартăн 7-мĕш. (ТАСС).

КĔСКЕН

Пĕтĕм Венгри территорийĕнчи больницăсенче пурĕ те 52.450 койка кăна. Трансильванире 100 пин çын пуçне 40 врач кăна шутланать.

Англире вырăнти оборона отрячĕсен пĕтĕм хисепĕ 1.700 пин çынна çитнĕ, вăл шутран командниăй составра 50 пин çын шутланать.

Осоавиахимăн çарти пек йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ

300 пине яхăн участник

Февралĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа пирĕн çĕршывра хуласемпе ялсенче Осоавиахимăн командăллă йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсем — Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 23 çул тултарнă ятпа иртнерекен çарти пек ăмăртусем пыраççĕ.

Осоавиахимăн облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи 43 организацийĕнчен илнĕ сведенисем тăрăх, пирвайхи 10 кун хушшинче ăмăртусене 300 пин çынна яхăн хутшăннă. Мускаври тата Мускав облаçĕнчи йĕлтĕрçĕ-осоавиахимовецсен ăмăртăвĕсем ăнăçлă пыраççĕ. Кунта мартăн 6-мĕш тĕлне общество членĕсем 34 пин çын ытла ăмăртăва хутшăннă. Киров облаçĕнче пирвайхи 5 кун хушшинче çĕршывра пĕрремĕш вырăна тухассишĕн 15 пине яхăн çын ăмăртнă, Молотов облаçĕнче—12 пин çын ытла, Краснодар крайĕнче — 41 пин çын.

Осоавиахимăн çарти пек йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсен пирвайхи 10 кунĕ хушшинче 78 пин снайпер, ворошиловла стрелоксем, ворошиловла юланутçăсем, парашютистсем, планеристсем, летчиксем тата «Готов к противовоздушной и противохимической обороне» значока илнĕ çынсем иккĕмĕш ступеньри ГТО комплексĕн йĕлтĕр нормисене панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Етĕрне, Советски тата Пăрачкав райсовет исполкомĕсем юлашки вăхăтра çулйĕр строительстви начар ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсем Чăваш АССР Совнаркомĕ 1940 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче çулйĕр строительстви валли стройматериалсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановлени пурнăçа кĕртсе пымарĕç. Тĕрĕсскипе, çулте асăннă районсенче çулйĕр ĕçне пачах ертсе пыман. Колхозсенче çулйĕр бригадисене туса çитермен, бригадăсене райсоветсен исполкомĕсенче çирĕплетмен. Çавна пула ĕнтĕ 1941 çулти мартăн 1-мĕшне Етĕрне районĕ чул хатĕрлемелли плана 6,8 процент, хăйăр хатĕрлемелли плана 37 процент; Пăрачкав районĕ чул хатĕрлесе турттарса кăлармалли плана 3,6 процент, Советски район—1,5 процент çеç тултарнă. Çакăн пек япăх ĕçлени Етĕрне—Çĕмĕрле — Пăрачкав хушшинчи çулйĕр строительствине хăрушлăх умне кăларса тăратать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Советски, Етĕрне райсовет исполкомĕсен председателĕсен, Пăрачкав райсовет исполкомĕн çулйĕр пай заведующин докладĕсене итлерĕ. Совнарком çак районсем Етĕрне — Çĕмĕрле — Пăрачкав хушшинчи çулйĕр строительствине хакламаннине палăртрĕ. Çакăнпа пĕрлех Совнарком райсовет исполкомĕсен председателĕсене çулйĕр строительстви вали материалсем хатĕрлес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма, стройматериалсем хатĕрлемелли плана апрелĕн 1-мĕш тĕлне тултарма хушнă. Колхозсенче çулйĕр бригадисене туса çитермелле, вĕсен йĕркеллĕ ĕçлесе тăмалла.

Совнарком республикăри ытти райĕнсем те çулйĕр строительствине япăх хатĕрленнине палăртрĕ. Çавна май, вăл райсоветсен исполкомĕсене çулйĕр строительстви çинчен ыйту лартса сӳтсе-явма тата тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă. Совнарком Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи çулйĕр Управленин начальникне Ваганов юлташа юлса пыракан районсене кирлĕ пек пулăшса пыма хушса хăварнă.

Зулав çурт заведующийĕсен семинарĕ

ЕТĔРНЕ. Çак кунсенче районри вулав çурчĕсен тата клубсен заведующийĕсен семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта вулав çурчĕсемпе клубсен ĕçне лайăхлатасси çинчен сӳтсе-явăрç. Унта 32 çын пулнă.

М. ИВАНОВ.

ПВХО значокĕн нормисене парасçĕ

ÇĔРПӲ. Педучилищере вĕренекенсем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Кунта оборона значокĕсен нормисене парас ĕçе лайăх организациленĕ. Çак кунсенче училищере вĕренекенсенчен ПВХО значокĕн нормисене 104 çын пачĕç.

В. АРТЕМЬЕВ.

Çар ĕçне вĕренмелли хатĕрсене хăйсемех тунă

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хирти Мăрат ялсоветĕнчи призывниксем çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕсем çар ĕçне вĕренме винтовка моделĕсем, гранатăсем т. ыт. хăйсемех туса хатĕрленĕ.

Призывниксем йĕлтĕрпе çӳреме лайăх вĕренсе çитрĕç. Вĕсем йĕлтĕрсене те хăйсемех тунă.

Е. ДЕРЖАВИН.

МЫСЛЕЦРАН КИЛЕКЕН ÇЫРУСЕМ

4. Вăрман хатĕрлекенсемпе пĕрле

Ялăн çитсе кĕнĕ чухне лампăсем сутнă. Хваттере кĕтĕмĕр. Вăрманта йывăç турттаракан лашасем валли тиесе килнĕ сĕлĕ-утăсене кĕлете тата сарай хыçне, вăрман касса хатĕрлекенсем валли килĕсенчен парса янă апат-çимĕссене пӳрте пушатма тытăнтăмăр.

— Вĕсем патне эпĕ паян пыма пултăм. Каç пулчĕ, никак çитмелле пулмарĕ. Кĕтеççĕ ĕнтĕ, килмерĕ теççĕ пулмалла.

Алексей Ильин, Элĕк районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, хăйĕн вăрманта ĕçлекен колхозникĕсем çинчен тăтăшах шухăшлать. Вăл сĕтел çине пĕр пĕчĕк хутаç кăларса хучĕ.

— Ку — вăрманта ĕçлекен мучисем валли кучченеç: махорка, пирус...

Буденный ячĕпе тăракан колхозра колхозниксен пухăвĕ пулнă, унта вăрманта ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен партипе правительство кăларнă закон çинчен сӳтсе-явнă. Чылай колхозниксем тухса калаçнă, вăрман хатĕрлес тата ăна турттарас заданине кĕске срокра тултарма сăмах — Вăрман хатĕрлев заданине халь-терех тултарсан хамăршăн та аван. панă.

Кĕçех лашасене канма тăратмалла пулать. Унпа пĕрлех çуракине хатĕрленес хăшпĕр ĕçсене туса çитермелле. Çак шухăшсемпе вăрманта ĕçлекенсем патне килсе каяс терĕм: вĕсем кулленхи нормăсене мĕн чухлĕ тултараççĕ, ĕçре мĕн кансĕрлет. Хамăр сăмаха большевикла пурнăçлани кирлĕ.

Тепĕр кунхине кăнтăрла çитес умĕн Мыслец лесоучастокне çитсе кĕтĕмĕр. Вăрманта йывăç ӳкнĕ сасă тата пуртă сасси кĕрлесе тăрать. Лавçăсем лашисене хăвалани илтĕнет. Кашни лав çине 2—3 кубометр вутă тиенĕ. Лавсем çине тата ытларах йывăç тиеме пулать, çул анаталла, анчах вăл сулăнчăкла, ăна юсаса тăмалла.

Кăнтăрла тĕлĕнче Буденный ячĕпе тăракан колхозран килнĕ лавçăсем лашасене апат çитерме тăратрĕç. Çакăн чухне Ильин юлташ колхозниксемпе калаçу пуçарса ячĕ. Малтан Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсем çинчен каласа пачĕ. Ялти ытти колхозниксем вăл конференцире ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ Маленков юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклада пысăк тимлĕхпе вĕренни çинчен пĕлтерчĕ, вăрман хатĕрлев заданине хăвăртрах тултарма кирлине палăртрĕ. Юлашкинчен хăйсен ĕçĕсем çинчен лавçăсенчен уйрăмăн ыйтса пĕлчĕ. Лавçăсем, хăйсен ĕçĕсемпе пĕрлех, лесоучасток начальникĕ Кайсаров патне кĕрсе калаçса тухма ыйтрĕç. Ильин лавçăсем кăтартса панă çитменлĕхсене блокнот çине паллă туса хучĕ. Акă хăшпĕр паллăсем: бракер Николаев йышăннă йывăççемшĕн квитанцисене вăхăтра çырса памасть; учета йĕркелле туса пымаççĕ.

Ку бригада вăрманта уйăх ытла вутă турттарать. Бригада членĕсем колхозра мĕнле ĕçсем туни çинчен тата хăйсен çемьисем мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлчĕç.

Вăл кун каçхине вăрман касакансем пурăнакан бараксене тепĕр хут çитсе тухрăмăр.

Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен председателĕ тавра сырса илчĕç. Ильин юлташ вĕсене махорка, пирус тата спичка валеççе пачĕ. Унтан калаçу пуçланчĕ. Хăшĕ хăйĕн çемьи мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлме тăрăшать, тепри — килтен хăйне валли мĕнле апат-çимĕссем парса яма ыйтнине кайса калама сĕнет, виçĕмĕшĕ — вăрман касса хатĕрлесси мĕнле пыни çинчен каласа пама тăрăшать.

—Вăрман хатĕрлес задание тултармасăр кунтан тухас марччĕ. Кайран тата колхозри ĕçсене тумалла.

— Тĕрĕс калатăн, Дмитрий Семеныч, — терĕ Ильин юлташ, — халĕ вăрманта ĕçлеме, çурхи вăхăтсемпе планлаштарсан, авантарах та: ни ытла сивĕ мар, ни ăшă мар. Тăрăшса, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлĕр. Вара хамăра панă заданисене ăнăçлăн тултарăпăр.

Малалла Ильин юлташ вăрман хатĕрлени хамăр промышленноçа тата оборонăна кирли çинчен каласа пачĕ. Унтан хамăр çĕршыври çĕнĕ çитĕнӳсемпе Европăри тата Африкăри вăрçă ĕçĕсен юлашки хыпарĕсене пĕлтерчĕ.

— Вăрманта кунта çак енчен начар, — терĕç ăна колхозниксем, — нимĕнле хыпарсене те çийĕнчех пĕлсе тăраймастпăр: радио çук, хаçат-журналсем килсе тăмаççĕ, агитаторсем килсе куçа курăнмаççĕ. Куллен кирлĕ таварсене вăрманта ĕçлекенсем патĕнче сутассине организацилемен-ха.

Вăрманта ĕçлекенсем кăтартнă çитменлĕхсем çинчен каласа пама Ильин юлташ Мыслец лесоучастокĕн начальникĕ Кайсаров юлташ патне кайрĕ. Анчах çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе участокра халĕ нимĕн те тума-ха.

Ив. МОСЕЕВ.

Юлса пыма сăлтав çук

СОВЕТСКОЕ. Тури Ачакри «Крестьянская газета» колхоз вăрман турттармалли плана пĕтĕмпех тултарчĕ. «Клевер» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем начар мар ĕçлеççĕ.

Ильич ячĕпе тăракан колхозăн 465 кубометр вăрман касса хатĕрлемелле тата 500 кубометр турттармалла пулнă. Анчах паянхи куна çитсе те çак заданине колхоз чĕрĕкне те тултарман. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз 460 кубометр вырăнне 70 кубометр кăна касса хатĕрленĕ.

К. Шумилов.

400 хуçалăх колхоза кĕнĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Февраль уйăхĕнче районри единоличниксем колхоза кĕрес ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Пĕр уйăх хушшинче районри колхозсене единоличниксем 400 хуçалăх кĕнĕ. Çапла, «Комсомолец» колхоза—40, «Сталинград» колхоза—33 хуçалăх кĕнĕ.

Единоличниксем колхоза кĕресси куллен-кун ӳссе пырать.

Т. Н.

Партконференци материалĕсене вĕренетпĕр

Элпир, №-лĕ чăсри кĕçĕн командирсен шкулĕнче вĕренекен курсантсем, XVIII партконференци решенийĕсене вĕренме тытăнтăмăр.

Конференци материалĕсене вĕрентес тĕлĕшпе агитаторсем уйăрнă. Вĕсем кашни кунах калаçусем ирттереççĕ. Агитаторсенчен Н. Кузьмин, Тюрин, Н. Курочкин тата Васильев юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Сурçĕр Кавказ çар округĕ.

Дм. ИВАНОВ.

Хĕрлĕ ялавлă класс

ШАХАСАН. Район центрĕнчи вăтам шкулта «Школьная правда» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать. Стена хаçачĕ вĕренӳ пахалăхне ӳстерме, вĕренекенсене коммунистла воспитани парас ĕçе лайăхлатма пысăк пулăшу пачĕ. Çавăн пекех дисциплинăна çирĕплетес тĕлĕшпе те хаçат палли вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн 7-мĕш «А» класс—малта пыракан классенчен пĕрийĕ. Ку класра вĕренӳ пахалăхĕ уйрăмах лайăх тата вĕренме те йĕркеллĕ çӳреççĕ.

7-мĕш «А» класа вĕренӳ ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав пачĕç. Вĕренекенсем ку ялава малашне те хăйсен класĕнчех усрассишĕн тăрăшаççĕ.

В. МИХАЙЛОВ.

Çĕнĕ кĔнекесем

Проф. А. РЕДЬКИН. «Сыснасене тăрантарасси тата пăхса усрасси çинчен». Чăвашгосиздат. 1941 çул. Хакĕ 75 пус.

Сысна — аш-какай фабрики, тесе калаççĕ. Ку вăл питех те тĕрĕс. Сысна — хăвăрт ĕрчекен тата хăвăрт ӳсекен выльăх.

Проф. А. Редькин çак кĕнекен пуçламĕшĕнче, сысна пысăк усă пани çинчен çапла çырать: «Икĕ хут çурăлана хыççăн çулталăк хушшинче 20—25 тата ытларах та сысна çурисем илме пулать». Кашни сысна аминчен çулталăкра 20—25 штука сысна çури!

7—9 уйăхри сына çури, ăна лайăх пăхса ӳстерсен, 75—140 килограмм таран чĕрçу тата какай пама пултарать.

Анчах сыснасене лайăх пăхса усрани тата тĕрĕс тăрантарни кирлĕ. Колхозсен сысна ферми заведующийĕсемпе фермăра ĕçлекенсен хăйсен ĕçне тĕплĕн, ăста пĕлес пулать. Вĕсене проф. А. Редькин кĕнеки пысăк пулăшу парĕ. Çавăнпа вĕсен пурин те ку кĕнекене туянса вуласа тухмалла.

Çак кĕнекере сыснасене тата сына çурисене хăçан мĕнле апат парасси, апата мĕнле хатĕрлесси, чиртен сыхласси тата ашлăх самăртасси çинчен тĕплĕн каласа панă.

В. И. Чапаев ячĕпе çĕнĕ музейсем уçаççĕ

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем халăх хушшинчен тухнă граждан вăрçи геройне В. И. Чапаева юратса тата пысăк хисепе хурса аса илеççĕ. Унăн пурнăçĕ тата Ленин—Сталин партийĕшĕн вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса тунă ĕçĕсем миллионшар совет патриочĕсемшĕн чи лайăх пример пулса тăраççĕ. Талантлă полководец ячĕпе çĕнĕрен те çĕнĕ музейсем уçаççĕ. Çак музейсем унăн пурнăçĕпе паттăрла ĕçĕсене тĕплĕн кăтартса параççĕ.

В. И. Чапаев ятне панă Хĕрлĕ Яр ялĕнче (Уфа районĕ, Башкир АССР) тата Чкаловски облаçри Лбищенск хулинче унăн ятне асăнса музейсем уçаççĕ. Халь унта картинăсем, схемăсем, фото-ӳкерчĕксем, пирĕн земляк пурнăçĕпе боевой ĕçĕсене кăтартакан тата ытти документсем нумай пухаççĕ.

Музейри картинăсемпе документсем тăван çĕршыва граждан вăрçин геройĕ Василий Иванович Чапаев пек сыхлама вĕренме пулăшаççĕ. Вĕсем Ленин — Сталин ĕçне, тăван çĕршыва вĕçĕхĕррисĕр парăнса ĕçлеме мĕнпур совет ĕççыннисене вĕрентес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

В. В.

Квартал планне тултарнă

Лапсарти (Шупашкар р.) промартель Çĕньял Уйкассинчи промартельне ăмăртса ĕçлет. Ăмăртса ĕçлесе пĕрремĕш квартални плана 100 процентчĕпех тултарнă, 68 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Н. ЯШКОВ.

Хисеплĕ редактор юлташ!

Хăвăр редакцилекен хаçат урлă юбилей кунĕсенче мана хисеплесе саламланă учрежденисене, организацисене тата уйрăм çынсене — пурне те эпĕ чĕререн тав туни çинчен пĕлтерме ыйтатăп.

С. В. Эльгер.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Мариинско-Посадский райздрав и райгрупком союза медсантруд с прискорбием извещают, что 6 марта с. г. в Марпосадской больнице после продолжительной и тяжелой болезни скончался на 70-м году жизни старейший врач Чувашии

СТЕПАНОВ Николай Иванович.

Т. Г. ШЕВЧЕНКО

(Вилнĕренпе 80 çул тултарнă тĕле)

1861 çулти мартăн 10-мĕшĕнче Украина халăхĕн аслă поэчĕ Тарас Григорьевич Шевченко вилнĕ.

Шевченко хăйĕн сăввисене, поэмисене тата шухăшăсене çĕршыва Николай патшан хаяр реакцийĕ пусарса тăнă çулсенче çырма пуçланă. Халăх чуралăх сăнчăрĕнче асапланнă.

Шевченко крепосной чуралăхăн мĕнпур йывăрлăхне хăй пурнăçĕнче тӳссе курнă. Аччаллах сĕм тăлăха юлса, вăл 8 çулта чухнех кĕтӳ кĕтнĕ, маляр ĕçне вĕреннĕ, батрак пулса ĕçленĕ. 15 çулта чух Шевченко-помещик-крепостник Энгельгардăн кухнине лекет. Çамрăклах картинăсем ӳкерме юратнă талантлă ятăна Энгельгардт 2.500 тенке сутнă. Шевченкошăн укçа тӳлесе ăна пĕрке кăларас ĕçе Жуковский поэтпа Брюллов художник хĕрӳллĕн хутшăннă. 1838 çулта ирĕк илнĕ 23 çулти Шевченко хăйĕн тăван чĕлхипе сăвăсем çырма пуçланă, çав сăвăсенче халăхăн хĕнхурне питех те тарăннăн, вăйлăн кăтартса панă.

Шевченкон хаклă ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрет — вăл Художествăсен Академине кĕрет, унта аслă художник Карл Брюллов ертсе пынипе картинăсем ӳкерме вĕренет. Академире вăл вырăс поэзийĕпе (Радищев, Пушкин, Рылеев, Лермонтов произведенийĕсемпе), Хĕвеланăç Европăри литературăпа паллашать. Академири лекцисем, Брюлловпа иртнĕрне калаçусем унăн культурине ӳстерсе пынă, петрашевецсен пытанса ĕçлекен революциллĕ кружокĕпе сыхăну тытни унăн политикăллă ăнланулăхне тарăлатнă.

1838 çулта вăл хăйĕн пирвайхи поэмисене çырать («Порченая», «Катерина»). Поэмăсем çакна кăтартса параççĕ: крепостной чуралăхпа политикăллă прогрессăрлăх условийĕсенче хресченсен пурнăçĕ чăтма çук йывăр. Помещиксем халăха эксплоатацилесе пурăнаççĕ, хаяр пусмăр айĕнче халăхăн телей те, хаваслăх та çук. Анчах Шевченко халăхăн малашнехи пурнăçĕ телейлĕ пуласса шаннă: «Пирĕн шухăш, пирĕн юрă вилес çук, пĕтес çук», тесе çырнă вăл 1839 çулта хăйĕн пĕр сăвинче. «Гайдамаки» ятлă историллĕ поэмăра (1841 ç.) вăл Украина халăхĕн паттăрлăхне, унăн захватчиксемпе пусмăрçăсене — пансен Польшине, хирĕçле çĕнтерӳллĕ вăрçине, нацийĕн ирĕклĕхшĕн пынă кĕрешĕвне кăтартса панă.



Поэт царизма пĕтĕм чĕререн курайман. «Сон» ятлă сатирăллă поэмăра вăл самодержави режимне хаяр çилĕпе питлет, «Кавказ» поэмăра вăл патша Российине халăхсен темĕн пысăкĕш тĕрми пек кăтартса парать, çак поэмăрах вăл царизм пусмăрĕ айĕнчи халăхсен туслăхĕн идейине кăларса тăратать.

Шевченко хăй курайман царизмпа вырăс халăхне нихăçан та пĕр карта лартман. Йăлтах урăхла, унăн куçĕ умĕнче царизм — вырăс, украин халăхĕн тата мĕнпур тăванлă халăхсен тăшманĕ.

1845 çулта Художествăсен Академийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Шевченко Украинăна кайнă. Çав çулсенче крепостниксен пусмăрĕнче асапланакан халăх массисен пăлханăвĕсем ӳссе пынă. 1845—1851 çулсем хушшинче пĕр Украинăра кăна восстанисен хисепĕ 261 восстанирен 399 восстание çити ӳснĕ. «Хальхи вăхăтра ялсенче хăрушла ĕçсем пулса иртеççĕ... Хура халăх бунтсем тăвать», — тесе çырнă 1845 çулта помещик Гладченко. Хресченсен революциллĕ шухăш-кăмăлĕсем ӳсни Шевченкон революциллĕ ăнланулăхĕнче те палăрнă. 1845 çулта çырнă сăвăсенче поэт революци тума чĕннĕ. Вăл çĕршывра «çивĕч çĕçĕсем çуталса» çĕклейессе, халăх революцийĕ пуçланасса шаннă.

«Хушса хăварни» ятлă сăвăра халăха вăл сăнчăрсене татса ывăтма, тăшман юнне тăкса ирĕке тухма чĕннĕ.

1845—1847 çулсенче Шевченко тӳрех хресченсем хушшинче революциллĕ пропаганда сарас тĕлĕшпе ĕçлеме пуçланă.

Украинăра вăл пытанса ĕçлекен Кирилло-Мефодиевски обществăн члевĕсемпе паллашнă, çак общество крепостной правăна пăрахăçа кăларассишĕн тăрăшнă. Çак кружок çинчен донос панă тăрăх 1847 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнче Шевченкона арестленĕ, «киревсĕр сăвăсем çырнăшăн» Оренбург крайне рядовой салтак туса янă, «полици çирĕпшĕн асăрхаса тăмалла, çырма тата ӳкерчĕксем тума чармалла» тунă. Анчах Шевченко унта та царизма хирĕç хаяр сăвăсем çырнă.

10 çултан Петербурга тавăрăнсан Шевченко вырăссен раволюциллĕ демократĕсемпе — аслă писательсемпе Чернышевскипе, Добролюбовпа, Некрасовпа çыхăнса ĕçлеме тытăнать. Унăн революциллĕ шухăшĕсене арест та, ссылка та çĕмĕрейменĕ. Вăл ссылка хыççăн та крепостной пусмăрти массăсен шанчăклă тусĕ тата хӳтлевçи пулнă. Шевченко ссылкăран таврăннă вăхăт — Российăри обществăллă пурнăç çĕкленсе, çĕршывра ирĕклĕхшĕн пыракан движенипе революциллĕ ситуаци ӳссе пынă вăхăт пулнă.

Царизмпа помещиксене хирĕç пынă кĕрешӳре, вырăссен революциллĕ аслă демократĕсем ертсе пынă кĕрешӳре, Шевченко Чернышевскипе пĕрле пулнă. Чернышевскипе пĕрле вăл халăха восстани тума чĕннĕ. «Россий̆ана пуртă тытма чĕнĕр», — тесе çырнă Чернышевский. Шевченко, 1861 çулти реформа умĕн, çапла çырнă: «ырлăх ан кĕт, ирĕклĕх ан кĕт, ăна Николай пĕтерчĕ», телей те ирĕклĕ пурнăçа кĕрешсе илме «пысăк чукмар йăтмалла, хĕçсене çивĕчрех хăйрамалла».

Шевченкон юлашки çулĕсенчи сăвăсенче пусмăрти çынсен телейĕшĕн пыракан кĕрешӳ гимнĕ янăраса тăрать.

Çавăнпа та ĕнтĕ ăна патша правительстви курайман, унăн сăвăсене пичетлеме тата вулама чарнă, 1914 çулта çĕршывра аслă поэт çуралнăранпа 100 çул тултарнине паллă тума та ирĕк паман.

Шевченко Украина культурипе литературинче кăна мар, вырăс культурипе тĕнчери культурăра та калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Октябрьти Социализмлă аслă революци Шевченко ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртрĕ — Российăри халăхсене пурăнă кăларчĕ.

Совет Союзĕнчи телейлĕ халăхсем Украинăн аслă поэчĕн произведенийĕсене хăйсен тăван чĕлхипе вулаççĕ, унăн ятне юратса асăнассĕ.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Ядринской артели „1-е мая“ системы Чувашпромсоюза на 1-I—41 года (в тыс. р.)

АКТИВ

Наименование статей баланса	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
Основные средства	15,9	15,4
Расходы за счет будущих периодов	2,7	3,4
Отвлеченные средства	3,5	12,1
Убытки прошлых лет	—	3,4
Предметы, не относимые к основным средствам	7,1	9,1
Сырье, материалы и топливо	20,5	16,6
Производство	0,3	1,7
Готовая продукция и товары	8,3	7,1
Денежные средства	0,1	7,4
Расчеты (дебиторы)	5,0	2,5
Убытки отчетного года	3,4	—
Товары отгруж. и вып. работы	3,4	—
БАЛАНС	70,2	78,7

ПАССИВ

Наименование статей баланса	Сумма: На 1-ое января 1940 г.	Сумма: На 1-ое января 1941 г.
Фонды и резервы	15,2	19,9
Регулирующие статьи	1,1	—
Долгосрочные кредиты	35,6	33,1
Краткосрочные кредиты госбанка	—	—
Расчеты (кредиторы)	18,3	6,5
Прибыль отчетного года	—	19,2
БАЛАНС	70,2	78,7

Результаты хозяйственной деятельности (в тыс. руб.)

Убытки			Прибыли		
Убытки от реализации	7,1	6,9	Доходы от реализации	1,3	25,8
Расходы и убытки разные	1,1	1,3	Доходы разные	3,5	1,6
ИТОГО	8,2	8,2	ИТОГО	4,8	27,4
Прибыль отчетного года	—	19,2	Убытки отчетного года	3,4	—
БАЛАНС	8,2	27,4	БАЛАНС	8,2	27,4

Председатель правления артели **Погодин.**

Бухгалтер **Козяков.**

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашпромсоюза 29 января 41 года.

Председатель балансовой комиссии **Шишкин М. С.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

НТ2689

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.